К 84.09(=Чув)
А 94

Порфирий Афанасьев

Ч-41205

# ПУРĂНАТĂП АТĂЛ ХĔРРИНЧЕ



Национальная библиотека ЧР

4-041205

ВОЗВРАТИТЕ КНИГУ НЕ ПОЗЖЕ

обозначенного здесь срока

50 1990 5000

Порфирий Афанасьев

# ПУРĂНАТĂП АТĂЛ ХĔРРИНЧЕ

САВĂСЕМПЕ ПОЭМĂСЕМ

Шупашкар
Чăваш
кĕнеке
издательстви
1983

ББК 81 Чув
А 94

11 ОКТ 2017

1-41205

НАЦИОНАЛЬНАЯ
БИБЛИОТЕКА
ЧУВАШСКОЙ РЕСПУБЛИКИ

$A \frac{4803010200-103}{М\ 136(03)-83}$ 88—83

© Чăваш кĕнеке издательстви, 1983 ç

*

Килĕшет мана çак çăвăн ыррă кăмăлĕ,—
Е хĕвел хĕртсе пăхать те пытанать,
Е чуна тăвăрламасăр, шăппăн,
çăмăллăн
Ашă çумăр ача пек ташла пуçлать.

Мĕн-ши ку?
Элле майлашрĕ-ши çанталăкĕ,
Çитĕ терĕ-ши çынна хĕн кăтартса?
Çумăрсем унччен лӳшкетчĕç талăк-
талăкăн,
Е хĕвел йăлт хăваратчĕ çунтарса.

Мĕн-ши ку?
Ман чунăмра та канлĕ лăпкăлăх.
Çутă шанчăк, пиçĕ шанчăк чĕрере.
Çăвĕ темшĕн, темшĕн питĕ
ыррă кăмăллă.
Ĕнтĕ эпĕ те, туссемĕр, хĕрĕхре.

## ÇĂЛ ЧАВАТПĂР

Çăл чаватпăр, шыв шыратпăр.
Кунĕ шăрăх. Тарăхатпăр.
Тепĕр си илсессĕнех,
Çăл тапса тухас пекех.

Анчах шывĕ курăнмасть.
Пăрахар ĕçе. Пулмасть.

Çук. Шырар-ха. Çăл чавар-ха,
Ял куллийĕ пулар мар-ха.
Антăхса та тарласа,
Çăл чаватпăр ăмăртса.

Ак вăл çăл! Шарлантарса,
Тухрĕ кĕмĕллĕн тапса.

Шыв шыратпăр. Шыв тупатпăр.
Ĕç ăннишĕн савăнатпăр.
Килĕр, ĕçĕр! Шăрăхра
Кăшт пусарăр чунăра.

...Шывĕ килĕшрĕ пулсан,
Пирĕн ĕç сая кайман.

## КУН ИРТНĔÇЕМĔН...

Кун иртнĕçемĕн, çул васканăçем
Ыр çынсене кăна кура пуçларăм,
Çывăхарах пек унчченхи туссем,
Хĕрӳллĕрех савса пăхать пек арăм.

Ыр сунманни ир сӳнчĕ-ши вара?
Е вăл вăхăтлăха анчах пытанчĕ?

Пакăлтатма сăлтав тупайманран
Чунне хĕнерĕ пулĕ те — лăпланчĕ.

Пĕрре кăна пурнатпăр тĕнчере
Тесе, атте-анне пилне усратăп:
Çынсен чĕрисене кĕре-кĕре
Хĕвел ăшши пек шанчăк хăваратăп.

Енчен асапланать пулсан этем,
Ун пурнăçне куççуль касать пулсассăн,
Ун çĕклемне эп хам çине илем,
Тӳсем пĕччен — çӳретĕр çын хаваслăн.

Çук, мухтанмастăп ырă чунăмпа.
Поэт чĕри ни ылтăн мар, ни пурçăн,
Кĕрешнĕ чух ылханлă тăшманпа
Поэт чĕри — хĕртсе кăларнă хурçă.

Сив чунлисем те çывăх тусăмсем
Туяççĕ пуль çакна, тесе шутларăм.
Кун иртнĕçемĕн, çул васканăçем
Ыр çынсене кăна кура пуçларăм.

## ÇЫННА ЫРĂ ТУ

Çынна хуйхă пусать.
Çын — пĕчченçĕ. Аптрать.
Çыннăн —
Çын чăтайми çухату.
Саспа мар, чĕрипе
Çын сана йыхăрать,—
Эс васка ун патне. Ырă ту.

Çыннăн — пысăк телей.
Çын — çын пек хĕпĕртет.

Чёрине
Шăнăçмасть юрату.
Çын пĕччен савăнмасть.
Юлташне вăл чĕнет,—
Эс васка ун патне. Ырă ту.

Çын пĕрре йăнăшать.
Йăнăшмасăр утма
Пултараймăн эс ху та,
Асту.
Çав çынна пулăшма,
Йăлт кусран калама
Эс васка ун патне. Ырă ту.

Çын çынпа пурăнать.
Сын çынпа савăнать.
Çын! —
Хăватлăн янрать сан яту.
Çын юраттăр çынна,
Хисеплетĕр çынна;
Çын патне эс васка.
Ырă ту.

## ПУРĂНАТĂП АТĂЛ ХĔРРИНЧЕ

Пурăнатăп Атăл хĕрринче,
Пултарулла чăвашсен çĕршывĕнче.
Кам пĕлмест-ши унăн ырă ятне —
Чапĕ кайрĕ пĕтĕм тĕнчене.

Пурăнатăп Атăл хĕрринче,
Тус-тăванлă халăхсен ытамĕнче.
Кам пĕлмест-ши Шупашкар хулине,
Унăн чаплă ывăлне-хĕрне.

Пуранатап Атал хёрринче,
Юр юрлатап Атал тинёсё çинчен.
Кам пёлмест-ши улап-тракторсене,
Мал туссем каларна вёсене.

Пуранатап Атал хёрринче,
Николаевпа Чапай çёршывёнче.
Ёмётёмёр чан пулса пынаран
Эпёр вайларах та Улапран.

## УН ЯЧЁ — ЛЕНИН

Янравла ячё ун яланлах
Ялав пек тарё ялкашса,
Çут тёнчери мёнпур ёçхалах
Валли чан çута кактартса.

Хаватла ячё ун яланлах
Сехёрлентерё ташмана,
Путланё, пётё тёрёсмарлах,
Çёнтерё тёрёслёх кана.

Мухтавла ячё ун яланлах
Кирек хаш халах чёринче.
Пуç пулё туслах та таванлах
Хитре те ырă çёр çинче.

Асамла ячё ун яланлах
Хёвел пек тарё çутатса.
Çак ят планета саванмалах —
Хёруллё, çута та таса!

Ун ячё ёмёр пуранмалах.
Ун ячё — Ленин.

Çынсене
Куллен малашлăха туртмалăх
Пĕрре вăл килнĕ тĕнчене.

## ХĔВЕЛЛĔ МАЙ

Эп хĕрлĕ уявсен мăнаçлăхне саватăп.
Хĕп-хĕрлĕ хăмачсен хĕрӳллĕ хĕмĕпе
Чĕрем хĕпĕртесе хĕмленнине туятăп,
Сасартăк хыпнă хӳхĕм хĕвел пек.

Эй, халăхăн хавас хевтеллĕ чун кăварĕ!
Хум хыççăн хум хитрен хумханнă хушăра
Хăюллă чĕресем тапаççĕ харăс-харăс,—
Хăват-хавал сахал-и халăхра!

Хаклатпăр хамăра хастар пулма пĕлнишĕн,
Хавхаланса-хĕрсе тухатпăр уй-хире.
Хыватпăр çĕн хула, хыпатпăр ыранхишĕн,
Мир пултăр тетпĕр ĕмĕрлĕх пире.

...Хĕпĕртесе, хĕвел хитрен çӳле хăпарчĕ.
Савса-хисеплесе тĕнче ешĕллĕхне,
Хĕвел те, сар хĕр пек,
Хĕлхем сапса хăварчĕ
Хиврен хĕлĕхленен хĕрӳ чĕресене.

## АННЕ ТĔРРИ

Юрла-юрла анне тĕрлетчĕ тĕрĕ.
Сасси-тĕрри çут хĕвел пек çиçетчĕ,
Те иртнине чĕнетчĕ кунĕн-çĕрĕн,
Те каччă-аттене аса илетчĕ?

Çич тĕслĕ асамат кĕперрине
Анне хыватчĕ шурă пир çине.

Макра-макра анне тĕрлетчĕ тĕрĕ.
Сасси-тĕрри ун хурлăхлăн чĕтретчĕ.
Те тăшмана ятлатчĕ кунĕн-çĕрĕн,
Те вилнĕ аттене кĕтсе йĕретчĕ.

Хура хĕрес — хура ылхан ятне
Анне лартатчĕ шурă пир çине.

Руна çырулăхне хĕрсех тĕпчетпĕр:
Мĕн калĕ-ши пире çак вăрттăн тĕрĕ?
Кунçул унта — çавна аван пĕлетпĕр —
Кунçул унта тапса тăрать чĕп-чĕррĕн.

Ан тив, пуçтартăр тĕрĕ малашне
Хĕвелĕн çитмĕл çичĕ вăййине.

## УХСАЙ ЯККĂВНЕ

Салам сана, Якку пиччемĕр!
Чăваш чапне çĕкле-çĕкле,
Кунçул васканине сисмесĕр,
Ак эс те çитрĕн çитмĕле.

Ту урлă çул выртать. Çав тăвăн
Чи тăрринче тăратăн эс.
Ытарайми Тăван çĕршывăн
Ытарайми пин-пин кĕтес.

Пĕри вăл санăн — Пушкăрт енĕ.
Вуншар çăлкуçлă Слакпуçра
Аçу-аннӳ сана сиктернĕ
Юмах-халаплă сăпкара.

Пĕр классик çеç сахал-мĕн пулнă,
Ик классик парăр Слакпуçа!
...Эй, ыр чĕреллĕ, тулăх чунлă
Слакпуç, Слакпуç, тайма пуçах.

Тавах сана, Октябрь çилĕ!
Поэтсене çунат парса,
Эс вĕсене вĕçтернĕ çӳллĕ,
Юрлаччăр, тенĕ, савăнса.

Юрларăн эс, Ухсай пиччемĕр,
Хĕрӳ ĕçпе малашлăха
Утмашкăн ывăнма пĕлмесĕр
Эс чĕнтĕн пирĕн халăха.

Октябрьшĕн, çĕн саманашăн
Хыпса ĕçлерĕн Кĕлпукпа
Пур халăхпа пĕр тан пуласшăн,
Телей тупасшăн ушкăнпа.

Тăван çĕршыв вута кĕрсессĕн,
Эс хăвăн атă кунчинчен
Тетрадь илсе, шав йĕркелерĕн
Йыхравлă сăвă кунсерен.

Çĕнтерчĕ халăх, паттăр халăх...
«Куç пек упрар, туссем, мире,
Тĕп пултăр вăрçă, курайманлăх!» —
Тесе вĕрентрĕн эс пире.

Вĕрентрĕн эс
Таса чĕреллĕ,
Тӳп-тӳрĕ чунлă пурăнма,
Чăваш ятне
Хитре, йĕркеллĕ,
Сăваплă, чыслă упрама.

Вĕрентрĕн эс: çуратнă çĕрĕн
Чăн илемне курас тесен,
Юрат ăна, сипле — вăл пирĕн
Тăван сăпка мĕн ĕмĕртен.

Ачалăхра ху çутнă çăлтăр
Вут-хĕм сапса çиçет паян.
Тӳпӳ ялан сенкеррĕн çунтăр,
Ан тĕксĕмлентĕр нихăçан.

Сан уяву — Чăваш уявĕ,
Чĕре юрлать кăкăрсенче.
Эс — халăх ывăлĕ, мухтавĕ,
Тавах сана, Якку пичче!

1981 çул, ноябрь.

## ЧУН ПУР-ХА, ТЕТĔП...

Пулмарĕ сăвă, мĕн тăвас-ха ман?
Чуна графоманла çăварлăхлас-и?
Пуш параппан çапмашкăн хăнăхман,
Вăл пултăр параппанçăсен хавасĕ.

Пулмарĕ сăвă, каймăп кивçене,
Кивçен илни — поэтшăн пысăк айăп.
Вăл çырлахтарĕ чунсăррисене,
Чун пур чухне юта нихçан та каймăп.

Чун пур-ха, тетĕп — шăранмасть йĕрке
Малтан хам чунăма тыткăнламасăр.
...Сăвва мĕнле эп ярăп ирĕке
Хăватсăр,
Чунсăр,
Сасăсăр,
Çунатсăр?

## ТӖЛӖКПЕ ЧӐНЛАХ

Эп тӗлӗкре ҫӗркаҫ курсаттӑм ӑйӑр,
Кӑлкан пек шурӑ ҫилхинчен тытса,
Ҫӗклентӗмӗр унпа ҫак питӗ тӑвӑр,
Ҫак питӗ шавлӑ тӗнчерен хӑпса.

Вут-кайӑк пек вӗҫтертӗмӗр хӑюллӑн,
Пӗр ӗмӗт-шухӑш пирӗн — ҫӳлелле,
Алла тӑсса пыратӑп пултаруллӑн,
Халь-халь тытас пек ҫутӑ хӗвеле.

Шанатӑр-и ҫавна — чӑн пулчӗ тӗлӗк.
Кӳл хӗрринче эп куртӑм ирхине
Ҫав шурӑ ӑйӑрпа пӗрле вунпилӗк
Ҫулхи яш пӳллӗ кӳршӗ ачине.

Вӑл ӑйӑра шӑварчӗ, хырчӑкларӗ,
Вӑл ӑйӑра лӑпкарӗ ӑмринчен,
Утланчӗ те—хайхи вут-кайӑк мар-и?—
Ҫухалчӗ ӑйӑр куҫӑм умӗнчен.

Ӑҫта эс кайса кӗтӗн, ман шур ӑйӑр?
Ӑҫта эс халь, вунпиллӗкри ача?
...Ачалӑха, туссем, кирек мӗн тӑвӑр,
Эпир куратпӑр тӗлӗкре анчах.

## ҪАРӐК ӖШНИ

Ӗшне ҫавракa пулнӑран
Ят панӑ пуль — Ҫарӑк ӗшни.
Кунта тӗл пулатпӑр ялан —
Тус-йыш, хурӑнташ, чун савни.

Тӗнче ҫавракa пулнӑран
Кунтах таврӑнатпӑр ҫуллен.

Каятпăр пулас-и вăйран
Кунти çăл шывне ĕçмесен.

Ӳпке сывлаймасть пек кал-кал
Кăвайт тĕтĕмне çăтмасан,
Юнать пек пире тăван ял
Ак çак ĕшнене пымасан...

Ачалăх туртать-и кунта,
Аваллăх чĕнет-и пире?
Илетпĕр сĕткен тымартан,
Выртса чуптăватпăр çĕре.

Куççуль пек таса çăлкуçа,
Таçта кайнă евĕр, юта,
Эпир пăрахмастпăр укçа,
Эпир таврăнатпăр кунтах.

## АВГУСТ

Хветĕр УЯРА

Август уйăхĕн хăйĕн илемĕ.
Ирĕсем хăйне евĕр хитре.
Атăл çийĕн çĕклемĕн-çĕклемĕн
Хăпарать кăпăш шурă тĕтре.

Уяртать. Тӳпе тăрă та çӳллĕ.
Пăрахать вылямашкăн ăрша.
Инçетри курăнать илĕртӳллĕн,
Уçă çил тасатать сывлăша.

Сасă пар — сасă уçă та ирĕк
Ян кайса, аякра çухалать.
Ылтăн тĕслĕ сап-сарă уй-хирĕн
Ĕçлĕ шавĕ çĕклет кăмăла.

Садсенче панулми кĕрпекленнĕ,
Ăнса пулнă кăмпа вăрманта.
Çутçанталакăн сиплĕ сĕткенĕ,
Пилĕ-техĕмĕ — сан умăнта.

Çăлтăр çумăрĕ çулăмлăн çăвĕ,
Шевле çиçĕ тул çутăличчен.
...Август, август, ыр кăмăллă çăвăн
Эс чи чаплă уявĕ иккен.

## ÇТУППАН ТЕТЕ

Инке калать: «Кăшт вырт-ха, тĕршĕн,
Ав, вырăн сартăм кĕлете».
Мĕн пулчĕ-ха, ман ырă кӳршĕм,
Мĕн пулчĕ-ха, Çтуппан тете?

Сăну — шуркам. Сассу хавшанă.
Кĕреш пек çирĕп ӳт-пӳне
Мĕн мурĕ-ши килсе тылланă,
Мĕскер кăшланă ӳпкӳне?

Пулни — тек турă ан кăтарттăр.
Аçу килмерĕ вăрçăран.
Пурнас пулать! Пĕр кивĕ трактор
Хуса эс килтĕн Çĕньялтан.

Имшер кăна, çапах та каччă,
Çапах мал ĕмĕтлĕ, тӳрккес,—
Сухаламан ана нумайччĕ,
Çав сухана çĕклерĕн эс.

Паха апат мĕнне пĕлмесĕр
Çĕрле килеттĕн те килне,
Мĕскер хыпас-ха тенĕ евĕр
Куçран пăхаттăн аннӳне.

Аннў? Ун хӑйӗн те ҫав шухӑш.
Вӑл хӑй тин таврӑннӑ хиртен.
Пур чух сӗт-турӑх, пашалу кӑшт
Килсе илетчӗ вӑл пиртен.

Мӗн-ма тесен аттеҫӗм пурччӗ,
Фронтран суранлӑ килчӗ те,
Ҫапах пире пит лайӑх пулчӗ,
Ик ҫурт валли халь пӗр атте.

Йывӑрлӑхра пуҫа пӗкмесӗр,
Ӳпкелешмесӗр пурӑнма
Пире вӗрентрӗ вӑл, аттемӗр,
Сӑмах та ҫитмӗ тав тума.

Сан, кӑтра ҫӳҫлӗ, чӗрӗ каччӑн,
Пӗр ним те ҫукчӗ пӗлменни.
Тен, эс профессор пулмаллаччӗ —
Кил ҫӑмӑлрах кӑшт самани.

Колхоз комсоргӗ, ял мухтавӗ,
Сӑпайӗ-чысӗ пулнӑран
Малта пыракансен ялавӗ
Ӳкмен сан ҫирӗп аллунтан.

Ҫавна курса, пӗр кӗвӗҫ чунлӑ,
Пӗр пуш чӗреллӗ хулиган
Сана хӑварчӗ хӑрах куҫлӑ.
Паллах, сурать пуль ҫав суран.

...Ылханлӑ вӑрҫӑн вӗҫӗ пур-ши?
Тӑхлан ҫитет — миҫе ҫултан...
Эс вӑрҫӑра пулман, ман кӳршӗм,
Ҫапах аманнӑ эс унта.

## ЁНЕНЕТЁП ÇЫННА!

Ирсерен,
Каçсерен
Моторсем
пĕр самант
чарăнмарĕç,
Тăрăлтатрĕç МАЗсем,
КамАЗсем
шав уларĕç кунта,
Канăçа çухатса,
Хĕрсемпе каччăсем
çывăрмарĕç,
Каскăсем тăхăнса,
вут-хĕм сапрĕç
хĕрсех çĕр хута.
Хĕрсемпе каччăсем
улăп-паттăрсем пек
сăмах татрĕç,—
Аслă Атăл тĕпне
сарса хучĕç вĕсем
чул тӳшек,
Ĕмĕрхи çырана
тăрăшсах
шур бетон
тăхăнтартрĕç,
Кин пулас
сар хĕре
шурă явлăк
уртса янă пек.
Улшăнать географи.
Ялсем вырăнтан
куçса ларчĕç,
Çамрăкланчĕ хула,
курăр, унăн
урамĕсене

Чуптăвасшăн пулса,
çамрăк Атăл
хаваслăн кустарчĕ
Çут шевле сапакан,
юрлакан
хăйĕн хумĕсене.

Эп тăратăп паян
çĕнĕ тинĕспеле
куçа-куçăн.
Ун мăнаçлă таппи,
ун хăвачĕ çĕклет
ман чуна.
Анлăлан, савнă Атăл,
малалла юх эс
ирĕккĕн, уççăн,
Эс васка, анлă Атăл,
çĕршыва пиллеме
ырлăхна.

Ĕненетĕп çынна,
ĕççынни умĕнче
пуç таятăп,
Пин-пин çыннăн екки
Çыхăнать те хăватлă
тĕвве
Çĕнĕ тинĕс тăвать,
аркатать
аслă-чаплă
тăва та,
Е çутать Атăл çийĕн
алăпа туса хунă
хĕвел.
Ку вăл пирĕн хăват,
Ку вăл ирĕклĕ çыннăн
хăвачĕ,

НАЦИОНАЛЬНАЯ БИБЛИОТЕКА ЧУВАШСКОЙ РЕСПУБЛИКИ

Ч-41205

Ку вăл Ленин пиллене
никам çĕнейми
вăй-хăват.
Çĕнтерӳллĕн утма
йыхăрать халăха
тăван парти.
Çирĕп утăмлă халăх
çав çулпа
çĕнтерӳллĕн утать.

## ÇĔНТЕРӲ КУНĔ

Курни-илтни-ши ку, анне сăмахĕ-ши
Пуçран тухмасть, аса килет ялан,
Киле пырса, хыпар пĕлтерчĕ тахăшĕ:
«Вĕçленнĕ вăрçă... Савăнăç паян».

Атте те ман — салтак.
Тин çеç вăл таврăннă
Фронтран, вилес пек хытă аманса.
Çак хыпара илтсен вăл, хăйшĕн таварнăн,
Пĕр вăхăт тăчĕ шăп, шăлне çыртса.

Куçран пăхса, хĕрӳллĕн ыталарĕ вăл,
Мана, виç çул тултарнă ачана.
Çӳле çĕклерĕ — йывăрччĕ ыратăвĕ.
Юратăвĕ пăхман пуль сурана.

Курни-илтни-ши ку, анне сăмахĕ-ши?
Атте ытамĕнчен тухса кайса,
Эп халĕ те вĕçетĕп пек шур акăшăн,
Çунатсемпе сулмаклăн авăсса.

## ПЁЛЕТЁП...

Ишст кăна пăлан, ишст пăлан
Майракине шывран илмесĕр.
Кĕтрĕм сирс, тăван, кĕтрĕм, тăван,
Чӳречерен куçа илмесĕр.

Халăх юрринчен.

Пăланĕ ишнĕ-и, ишмен-и
Çак чĕлтĕр-чĕлтĕр Сĕнчере —
Анчах пĕлетĕп — çук иккенĕ
Тăван çĕршывăн, савнă енĕн
Ашши пек ăшă тĕнчере.

Тăванĕ кĕтнĕ-и, кĕтмен-и
Куçне илми чӳречерен —
Анчах пĕлетĕп — çук иккенĕ
Анне пек хытă кĕтекенĕ
Никам та çакă тĕнчере.

## ХУДОЖНИК, АНЛАНТАР МАНА...

Владимир Агеева

Художник, каласам мана çакна:
Сан ăшунта ларать мĕнле асамçă,
Мĕнле вăйпа чĕртетĕн эс çынна? —
Сан çыннусем чĕп-чĕррĕн курăнаççĕ.
Сăмах пуçар — атте-анне пекех,
Шанса та ĕненсе, пĕр пытармасăр.
Чăвашăн кунçулне хыпаланмасăр
Вĕсем уçса кăтартĕç пĕтĕмпех.
Художник, ăнлантар мана çакна,
Санран эп тахçанах ыйтса пĕлесшĕн:
Кисть вĕçĕнче усратăн-ши вутна,
Е — хĕвел пысăкăш чун-чĕрӳнте-ши?

## МУЗЫКА

Эс сарлака.
Çапах эс ним те мар.
Анчах — крещендо ӳкрӗ те саланчӗ.
Тин пулнӑ ӗмӗт, чун илсе, сывалчӗ,
Сасартӑках лектерчӗ ытама.

Тӑсатӑн ман пата аллусене,
Мана тытса хӗрӳллӗн ыталасшӑн,
Эс ӑнланасшӑн шухӑшӑмсене,
Эп пур — сана чӗртсе, юлташ тӑвасшӑн.

## ЧУНӐР ПУР-И?

Пӗверен вӗçсе хӑпарчӗ
Мӑшӑр кайӑк кӑвакал.
Чун сасартӑк çунатланчӗ:
Пурӑнать, пӗтмен-ха ял.

Шыв çине пӑхса тӑруçӑн
Шӑмпӑрт! сикрӗ те сасан,
Шӑрӑх кун та сывлӑш уççӑн
Туйӑнчӗ çавна курсан.

Автоçул çумрах пулин те,
Ютшӑнмасть унран чӗрчун,
Вӑл çынна шанать-ха питӗ,
Çын — чи çывӑх тусӗ ун.

Савнӑçа пытараймасӑр
Шӑп тӑраттӑмччӗ...
Пӑшал
Шап! шаплатрӗ.
Ӳкрӗ халсӑр
Мӑшӑр кайӑк кӑвакал.

Тарчӗ пулӑ. Аварах-тӑр.
Тек ан кӗтӗр тухасса.
«Эй, ҫынсем! Мӗн хӑтланатӑр!
Чунӑр пур-и иҫмасса?!»

Пӗр сас-чӳ тавраш пулмарӗ.
Леш пӑшал сасси кӑна
Ҫичӗ сыпӑклӑн янрарӗ,
Шарт! сиктерчӗ таврана.

## КУҪ ПЕК УПРАР

Пушкӑрт поэтне
Сафуан Алибаева

Ҫак самантра санпа пуласчӗ ман
Е Атӑл, е Шур Атӑл хӗрринче,
Санпа ларасчӗ, тусӑм Сафуан,
Тӗнчен ытарайми ытамӗнче.

Пырасчӗ паттӑр Салават патне,
Чапай ҫӗршывӗнчен салам йатса,
Санпа тухасчӗ Дёма хӗррине,
Сан чаплӑ Пушкӑртушӑн савӑнса.

Ҫак самантра санпа пуласчӗ ман!
Илтесчӗ санӑн хӳхӗм юрруна.
Ана, хӗрӳ ӗҫрен кӑшт пушансан,
Нефтяниксем юрлаҫҫӗ тахҫанах.

Санпа ҫӳресчӗ ман Пишпӳлекре,
Нарспи ҫӗршывӗпе хӗпӗртесе,
Чи аслӑ юрату мӗнне пире
Систерӗччӗҫ кунти шурсухалсем.

Çак самантра санпа пуласчĕ ман
Шап-шурă Шупашкар çыранĕнче,
Çын ĕмĕтне пула хумханакан
Вĕр-çĕнĕ аслă тинĕс хĕрринче.

Ман Чăвашра паян—хĕрӳ кунсем,
Вĕри ĕç шавĕ тыткăнлать чуна,
Çĕр кисретен мăнаçлă тракторсем
Пур кăмăлтан кăтартăттăм сана.

Çак самантра санпа пуласчĕ ман.
Санпа пулас текен кунта нумай,
Аста поэтсене хакланăран
Сана савса ыталĕччĕ Ухсай.

Урал та Атăл. Ку — яланлăха.
Вĕсем нихçан тăшман
хурри пулман.
Куç пек упрар эпир те туслăха.
Санпа пуласчĕ манăн, Пушкăртстан!

## ТУСЛĂХ ЮРРИ

Инçе мар-мĕн Шупашкар Уфаран,
Аслă Атăл инçе мар Уралтан.
Асамат кĕперĕ пек çиçет,
Салават кĕперĕ пек çиçет
Пирĕн туслăх çулĕ авалтан.

Инçе мар Шупашкар Уфаран
Пирĕн туслăх çирĕп пулнăран.

Аслă Ленин пĕрлештернĕ пире.
Туслăх çулĕ — пирĕн аслă тĕрек.
Утса тухнă çав çулпа Чапай,

Такăрлатнă çав çула Мустай —
Тăвансем ялан чун-чĕрере.
Инçе мар Шупашкар Уфаран
Пирĕн туслăх çирĕп пулнăран.

Çĕршыв çийĕн çутă ир хăпарать.
Пире парти малалла йыхăрать.
Алла-аллăн тытăнса утар,
Савăнар та юрăсем юрлар —
Мир хĕвелĕ пирĕншĕн çунать.
Инçе мар Шупашкар Уфаран
Пирĕн туслăх çирĕп пулнăран.

## ЧЕРНИГОВ

Аса илтĕм рушникĕн
Авалхи тĕррине,—
Çут тиреклĕ Чернигов
Тухрĕ куçăм умне.

Ытамне сарса янă
Çурхи çутă Десна
Тараватлăн, тăваннăн
Йыхăрать пек мана.

Кил, эпир ку — аваллăх,
Теççĕ пек тупăсем,
Шав чĕнеççĕ пек шавлăн
Йĕс шăнкăравлă чансем.

Коцюбинскин килйышĕ,
Е Довженкăн ратни
Савăнать пек килнишĕн
Хăйĕн туслă хăни.

Хĕпĕртет пек Тычинăн
Тăван ялĕ — Пески,

Ал çупать пек каштанăн
Шерепеллĕ çеçки.

Илтĕнеççĕ пек çывăх
Партизан юррисем.
Курăнаççĕ пек сыввăн
Халăх паттăрĕсем.

Эп унтах, куçа-куçăн
Уйрăлми юлташпа.
Аслă туслăх çăлкуçĕ —
Пирĕн çутă шăпа.

Унăн вăйĕ те хĕмĕ
Халăхра пулнă чух
Çав çăлкуç ĕмĕр-ĕмĕр
Типес çук, сӳнес çук.

...Украина рушникĕ
Çунат пачĕ чуна.
Çӳл тӳпеллĕ Чернигов,
Русь чĕнет пек мана.

## РЕПЬЯХ ЮРЛАТЬ

Эй, Украина çĕрĕ,
Эй, кăвак куç — Десна!
Таçта та пулăп-çӳрĕп —
Манайăп-и сана?

Çурхи садсем шап-шурă,
Тӳпе — пĕр пĕлĕт çук.
Çак ырлăхра пĕр юрă
Юхать — «Вĕç, вĕç, куккук».

Черниговри ман тусăм —
Репьях поэт юрлать,
Сасси хитре те уçă,
Сасси инçе каять.

Ку чăваш мар, ан тейĕр,—
Тĕп-тĕрĕс, чăвашла
Юрлать çут-кĕмĕл тенор
Тĕнче ăмсанмалла.

Итлет ăна черешня,
Итлет ăна каштан:
«Епле килсе илешнĕ
Çак юрă аякран?

Кĕвви ытла та çывăх,
Кĕвви астунă пек,
Эппин, каллех эс сывă,
Çурхи кăвак чечек?

Юрри сăпайлă çеç те,
Анчах епле хитре!
Ăна юрлатчĕ Çеçпĕл —
Тунсăхлакан чĕре».

Тавралăх лăпкă, курăр,
Вăл çак юрра тăнлать,
Янрать çунатлă юрă,
«Вĕç, вĕç, куккук» янрать.

Хăни нумай ку яхăн —
Итлеччĕр, илтчĕрин!
Юрри пĕтмест Репьяхăн,
Вăл — Çеçпĕл чунлă çын.

Юрлать Репьях тăванлăх
Кĕперĕ çийĕнче,

Нумай чĕлхеллĕ халăх
Вĕри ытамĕнче.

Йыш пулăшать те — шеппĕн
Хăватлă хор янрать.
...Çакна курсанччĕ Çеçпĕл,
Илтсенччĕ çак юрра.

## КИЛЕХ, ÇĔНĔ ÇУЛ!

Шурă юр ӳкет çĕр çине.
Çĕнĕ çул килет тĕнчене.
Урхамах сасси, шăнкăрав сасси,
Тăмрасен сасси илтĕнет.

Юрлас мар-и-ха, ташлас мар-и-ха,
Савнас мар-и-ха, юлташсем.
Кĕреке пуçне эпĕр мар-и-ха
Паян лартăмăр, паттăрсем!

Ĕмĕрех мухтав çăкăра!
Кăмăла çĕклет пыл-сăра.
Телейпе килен Çĕнĕ çул çинчен
Хăвăртрах тапратар юрра.

Ĕçĕ хамăрăн, юрри хамăрăн,
Хамăрах хуçа пулнăран,
Çут пуласлăх та пирĕн хамăрăн,
Таптас çук эс ăна, тăшман.

Шурă юр ӳкет çĕр çине.
Çĕнĕ çул килет тĕнчене.
Ыранхи кунсен, малалли ĕçсен
Çирĕп утăмĕ илтĕнет.

Эпĕр ĕçлĕпĕр, эпĕр çĕнĕпĕр,
Эпĕр юрлăпăр савăнса,
Килех, савăк çул, килех, Çĕнĕ çул,
Çĕнĕ ĕмĕре çывхартса.

## СĂМАХ

*(Баллада)*

Палатăра виççĕн выртатпăр.
Час-час тухтăра йыхăратпăр.
Авать, çĕмĕрет хăруш чир,
Пуçа çĕклейместпĕр эпир.

Выртатпăр — пĕр ватă, пĕр каччă,
Эп хам ун чухне вуннăраччĕ,
Малта — илĕртӳллĕ инçет,
Ман питĕ пурнассăм килет.

Выртатпăр пĕр уйăх, ик уйăх,
Ăшра — чун асапĕ те тунсăх.
Сехечĕ кунпа танлашать,
Тулта çил-тăман алхасать.

Çапах çак хаяр пăтрану та
Лăпланчĕ пĕрре. Йăлтăр çутă
Сапса, сар хĕр пек,— мĕнешкел! —
Палатăна кĕчĕ хĕвел.

«Пурнатпăр!» — ват çын хавхаланчĕ,
Ăçтан тухрĕ пулĕ хăвачĕ? —
Тытса-ши хĕвел çиппинчен
Çĕкленчĕ вăл выран çинчен.

Ик куçĕ — ик çутă шевлеччĕ,
Шевле — ĕмĕт-шанчăк тивлечĕ.
«Пурнатпăр! Хĕвел, ав, сӳнмен!» —
Ват çын хĕпĕртет чĕререн.

Сасартăк — йăл кулчĕ те каччă,
Мĕскер-ши ăна тарăхтарчĕ?
Пат татрĕ тискер çĕленле:
«Эп пурнăп-ха, эсĕ — темле...»

Ӳнччен эпĕ вилĕм курманччĕ,
Ăçта кĕрсе кайрĕ хăвачĕ
Ват çыннăн? Вăл ӳкрĕ тӳрех,
Лăпланчĕ аманнă чĕре.

Лăпланчĕ. Хĕвел сӳнсе ларчĕ.
Тĕнче тĕксĕмленчĕ, хуралчĕ.
..Паян та вăл ман асăмрах —
Тăхлан пек хăрушă сăмах.

## УЙРĂЛУ ВАЛЬСĔ

Паян
Каç ачаш,
Каç илемлĕ, чĕкеç чĕппи евĕр.
Паян
Каç хитре,
Илĕртӳллĕ юмах вĕçĕ пек.
Паян
Санпала ним çинчен калаçма пĕлеймесĕр,
Куçран куç илмесĕр,
Санпа çаврăнатăп
Çак тунсăхлă вальс çеммипе.

Эй, шкул —
Пирĕн ырă та çутă ачалăх ĕшни!
Эй, шкул —
Савăнни, шырани, хĕмленни, юратни!
Тăхта,
Эс пире каламашкăн тăхта: «Сывă пул!»

Кăштах савăнар-ха,
Юрлар-ха, ташлар-ха,
Пулар-ха санпа, тăван шкул.

Сăнать
Савăнса та,
Шанса та юратнă учитель,
Курать
Вăл пирте
Хăйĕн çамрăк таса ĕмĕтне.
Шанах,
Ырă тус, эпир халĕ тултарнă вунçиччĕ.
Çут ĕмĕт тулинччĕ.
Хăюллăн тухатпăр
Вĕри пурнăç çулĕ çине.

Килет
Тухăçран
Ылтăн-кĕмĕл сапса савăк шуçăм.
Янрать,
Таврана ыткăнать пирĕн çулăмлă вальс.
Паян
Санпала калаçма пĕлейместĕп эп, тусăм,
Ачалăхри тусăм,
Санпа çаврăнатăп,
Епле ман санпа уйрăлас?

## ШЕЛЕПИЕ

Сана тахçан «чăваш Гомерĕ» тенĕ,
Куçсăрланса юлнишĕн кăна мар.
Эс халăха пин юрă парнеленĕ,
Чун-чĕрÿнтен кăларнă хĕм-кăвар.

Нушаллă пурнăç, пусмăрĕ, асапĕ,
Хăв пек калас-тăк, пулнă—тур çырлах!
Анчах чăн-чăн поэт пуça усать-и —
Вăл кĕрешме чĕнет малтан малах.

Ун чĕринче — çуратнă халăх юнĕ,
Юратнă халăх кăмăлĕ унра.
Чăн-чăн поэтăн — аслă халăх чунĕ
Кĕрлет кашни поэма-сăвăра.

Мĕнех тĕнчешĕн сан «Çĕрпӳ пасарĕ»,
Мĕн уншăн Хăнтăрча та Çарăмсан? —
Эппин мĕн-ма-ха хĕрӳллĕн саламларĕ,
Сана хисеплесе, Ромен Роллан?!

Эппин мĕн-ма-ха Лахутипе Купала,
Толстой, Серафимович та Джамбул
Сана ытараймасăр пачĕç алă,
Каларĕç ыр сунса: «Телейлĕ пул!»

Çут ĕмĕтпе илемлĕ пурăнмалăх
Поэтсене этемлĕх çуратать.
Хăй пек чунлисене савать те халăх
Яланлăхах чун-чĕрере упрать.

## КИЛСЕ КУРĂР УЯВА

Ирĕклĕ çĕршыв ытамĕнче,
Çутă хумлă Атăл хĕрринче
Ĕçчен халăх,
Чăваш халăх пурăнать,
Çирĕппĕн, хăюллăн малалла утать.
        Килсе курăр уява,
        Хапăл тăвăр йыхрава.

Улăхĕ-çаранĕ çеçкере,
Хирĕсем-вăрманĕсем хитре.
Улмуççи те,
Шурă хурăн та йăмра —
Ман юратнă ешĕл тумлă çĕршывра.
Килсе курăр уява,
Хапăл тăвăр йыхрава.

Ялĕсем те хулисем ĕлккен,
Куçа илĕртеççĕ инçетрен.
Шурă акăш
Йĕрки пек çурт хыççăн çурт...
Хăнана эс, хаклă тусăм, килсе кур.
Килсе курăр уява,
Хапăл тăвăр йыхрава.

Килсе кур, юлташăм, уява,
Йышăнсам, юлташăм, йыхрава.
Ташлăпăр та
Юрă юрлăпăр ирччен
Çутă та телейлĕ ăраскал çинчен.
Килсе курăр уява,
Хапăл тăвăр йыхрава.

*

Пуррине упрама пĕлейместпĕр.
Çухатсан тарăхатпăр чунтан.
Çын чĕри питĕ кăткăс, атьсемĕр,
Ни рентген чухлаймасть, ни чикан.

Пуррине упрама вĕренсессĕн,
Çухатсан тарăхма пăрахсан,
Ансат чунлă пулайăн-ши эсĕ,
Манăн ырă тăван?

## ПĔР ЮЛТАША

Ан кĕвĕç — ăшă вырăн
Эп шыраман нихçан,
Çынна тăвасшăн ырă
Пурнатăп-çке ялан.

Ан хирĕл — пыл та çушăн
Эп юлташсем пухман,
«Тус пул», тесе-и хушăн,
Хăв сивĕ çын пулсан?

Пулам ыр ятлă эпĕ,
Тесе эп тăрăшман.
«Ĕçне кура — хисепĕ»,—
Тет халăх авалтан.

Ан çĕтĕл — курайманлăх
Тек ан пытар хĕвне.
Парать юратнă халăх
Ырришĕн ыррине.

*

А.

Куçран калас — вут-тăвăл тухĕ,
Каламасассăн чун чăтмасть.
Те ырă пулмалла, те шухă?
Шыратăп — тупсăм тупăнмасть.

Талант тени, тăванăм, тусăм,
Пĕр çын пуянлăхĕ çеç мар.
Çавна манса, хисепсĕр-сумсăр,
Тархасшăн, ыр ятна ан яр.

## ХĂНАНА ПЫР, ТЕРĔМ...

Н. Михлеева

Хăнана пыр, терĕм. Эс чĕнмерĕн.
Кӳрентертĕм пулĕ-çке, ара.
Шутламарăм — чăн-чăн çĕрĕçченĕн
Хăна шухăш мар çак шăрăхра.

*

Кĕтсе илекенсем телейлĕ.
Чунра çут ĕмĕт пулмаллах.
Кур, ĕмĕте упрать илемлĕн
Тулса вăй илнĕ сар пучах.

Парне пилле — вĕр-çĕнĕ пĕрчĕ.
Сирпĕнтерсе хĕвел хĕмне,
Çуталтăрах этемлĕх пӳрчĕ
Паян, ыран та ĕмĕрне.

## ТĂВАТШАР ЙĔРКЕН

Уйрăлми çӳреттĕмĕр — çухалтăн.
«Ĕçре ӳснĕ,— терĕç.— Пушă мар...»
Ма каларĕç? Ырă та, усал та
Пулса тăчĕ маншăн çак хыпар.

*

Пултăм санăн хăтлă çуртунта.
Хĕрнĕскер, мухтантăн çĕр хута.

Фикус пурччĕ. Эп шутларăм тек:
«Мĕншĕн фикус çураймасть чечек?»

*

Эс каларăн: «Тус-тăк — çурмалла».
Эп каларăм: «Кас халех, пайла».
Касрăн эс. Ак халь манра пурри
Тăрса юлчĕ шăп çуррин çурри.

*

Çыру илнĕ сăвăç хаçатран:
«Сăввусем янравлă пулайман».
Тарăхнă, тет, сăвăç: «Сăвăран
Шăнкăрав çакса ярас-им ман?»

*

Пĕтĕм чăнлăх — эрехре кăна,
Тенĕччĕ пĕр пĕлĕшĕм мана.
Тĕл пулас тесеттĕм каярах,
Пĕлĕшӳ сан, терĕç,— çăвара.

*

Пĕлме çук юлташăн кăмăлне —
Ыталать те, пытармасть вăйне.
Те чăнах сана вăл юрататъ,
Те пĕрре пăвать те пăрахать?

*

Юмаха чăн тунă пĕр поэт.
Чăнлăхне халь хăй те ĕненет.
— Этемех-и пулнă Улăп-паттăр?
— Çук-çке, çук. Ялан вăл пулнă... трактор.

*

— Мĕн тери аван санпа, савни!
Эс — мана пӳрни, эс — тур çырни!
— Çырни мар, тăванăм,—çырăнни—
Ытларах чуна пыраканни.

## НИМ ТУМА ТА ÇУК ЁНТĔ...

Ним тума та çук ĕнтĕ,
Ним тума та çук.
Тĕлĕн те, ан тĕлĕн те —
Пĕтрĕ калаçу.

Кайăк хур картин-картин
Кăнтăра вĕçет,
Йыхăрса илеймĕн тин,
Асатмах тивет.

Тĕлĕк пек сенкер каçсем
Асилме кăна.
Хурласа та тиркесе
Ан ятла мана.

Ним тума та çук ĕнтĕ,
Ним тума та çук.
Ашă хыççăн сивĕтĕ —
Иртсе кайрĕ çу.

*

Ир тăрсан та, каç выртсан та
Эп сана кăна куратăп.
Тарăхатăп, хăвалатăп.
Тархаслатăп, йыхăратăп.

Ăшăтать-и, сивĕтет-и
Ăшă кăмăл, сивĕ кăмăл,
Эп сана аса илеп те —
Пĕрре йывăр, пĕрре çăмăл.

Тунсăх, тунсăх, мĕн тăватăн?
Ĕнтĕ çук ман вăй-хăватăм,
Анчах эс умрах тăратăн,
Чунăм, пӳлĕхçĕм, тăванăм.

Кантăкран пăхса тăруçăн
Вĕлтĕрти черченкĕ çулçă
Е ӳкет-и, е ӳкмест-и
Тесе пăхрăм. Ырчĕ куçăм.

Вăл ӳкмерĕ. Вăл чĕтрерĕ.
Кĕр сивви мĕнне пĕлмерĕ.
Тунсăх кайрĕ ĕмĕре.
Вĕçĕ пулĕ-ши пĕрре?

## КАЙКĂР

*Поэма*

### 1. ЧУЛ ТУ

Эй, пĕчĕк çын!
Сан пур-и хăвату?
Вăй-хал кăшт сисĕнет-и хулунта?

Ачалăхра кашни тупать чул ту,
Хăйне тĕрĕслеме каять унта.

Мăнаçлă, ирĕк Атăл хĕрринче
Пур вата, чăнкă-чăнкă пĕр çыран.
Карттус ӳкет, атьсемĕр, пуç çинчен.
Ун тăррине курас тесе пăхсан.

Чи хăюлли кăна çав ту çине
Тарла-тарла пултарĕ хăпарма.
Çут хĕвеле, Хуркайăк картине
Чĕнет пек çӳллĕ ту ларса канма.

Аслатисем илешнĕ çав тăва
Парăнтарсан, ун тăррине çитсен,
Йăлт урăхла эс курăн Çĕршыва.
Ун вĕçĕ те, хĕрри те çук иккен!

...Чул ту çинче — пĕр кĕререх ача.
Хашкать кăштах. Ӳт-тирĕ йĕп-йĕпе.
Ĕшеннине хăй палăртмасть пачах.
Вăл калаçать çĕрпе те пĕлĕтпе.

Ӳн çумĕпе вĕçеççĕ кăйкăрсем.
Хĕвел юнашарах пек туйăнать.
Йĕри-тавра — ытарайми илем.
Пин тĕрлĕ тĕс куçа йăмăхтарать.

Пин тĕрлĕ тĕс пин шухăш çуратать.
Эй, пысăк Çĕр! Сан тупсăму ăçта?
Ăçтан çак аслă Атăл пуçланать?
Мĕн-ма çунать-ха çăлтăр çĕр хута?

Эй, вĕççĕр çутçанталăк! Ăнлантар,
Тен, аслати те çакăнтах çӳрет?
Ача-пăча чĕри хăравçă мар,
Аслатирен çапах та шикленет.

Эй, кăйкăрсем! Парнелĕр-ха çунат,
Тăван çĕре çӳлерехрен курам! —
Ик куçĕ ун ик кăвар пек çунать,
Ача чухне вĕçме шутламĕ кам?

Çапать, çапать хăватлă çил питрен.
Çил тустарать ача çӳçне-пуçне.
Ача пулин те — вăйсăр мар иккен,
Хал çитнĕ улăхмашкăн ту çине.

Пайтах кăтартĕ пурнăç малашне
Хĕнне-тертне —
Ав, аякра паян
Фашист урсах таптать Мадрид çĕрне.
Пул тӳсĕмлĕ,
Ан парăн, Андриян.

## 2. ВУТПА ЧЕЧЕК

Çавăрттарать тăман,
Çил шăхăрса вĕрет.
Вăй-хал хавшанăран
Канма ларас килет.

Анчах ăçта канас?
Сĕнтĕрвăрри хыçра,
Яла çитеймĕн час —
Вунпилĕк çухрăмра.

Чĕре сури тума
Çитмерĕ çĕрулми.
Умра — çиллес тăман
Пăхса та курăнми.

Чăт, Андриян, чăтах,
Унта, ав, анăçра

Чылай йывӑртарах —
Тӑшман виҫ ҫул урать.

Хаяр вӑрҫа пула
Аслисемпе пӗр тан
Сан авӑн ҫапмалла,
Сан хывмалла капан.

Сан утӑ ҫулмалла —
Ҫитмест арҫын алли.
Сан выльӑх пӑхмалла—
Аш кирлӗ фронт валли.

Вунвиҫҫӗри ачан
Сан ӗренес пулать,
Ӗреннӗ ҫын анчах
Хӑй вӑйлине туять.

Ах, ҫӑмӑл мар сана,
Чӗрӳ епле чӑтать?
Килте, ав, аҫуна
Пит йывӑр чир кӑшлать.

Ылханлӑ вӑрҫӑран
Куллен — хура хыпар,
Ҫав фашиста хӑҫан
Тӗп тӑвӗ Хӗрлӗ Ҫар?

...Урать, урать тӑман,
Урать каҫса кайса.
Утать-ха Андриян,
Мӗнпур вӑйне пухса.

Йӑлт кайнӑччӗ халтан.
Сасартӑк — ҫын умра.
Иван-ҫке ку, Иван!
Пиччеҫӗм, мӗн ара?

— Сана кӗте-кӗте
Шалт ывӑнтӑм, Энтри,
Аттен унта, килте...
Текех тапмасть чӗри...

Ҫапла вӗҫленчӗҫ сан
Ачалӑх кунӗсем.
Ан парӑн, Андриян.
Чунна хытар. Тӳссем.

...Эс Ҫӗнтерӳ кунне
Манаймӑн нихӑҫан.
Хитреччӗ ҫуркунне,
Ем-ешӗлччӗ вӑрман.

Пуҫтартӑн тӑрӑшса
Эс ҫеҫпӗл чечекне.
Каларӑн савӑнса:
— Ҫӗнтертӗмӗр, анне!

### 3. «ҪЫН ПУЛ!»

Кӳршӗре Карачӑм пурӑнать,
Ватӑскер, пит киввӗн курӑнать.
Темшӗн хутшӑнмасть хӑй ҫынсемпе,
Калаҫсан калаҫӗ — йыттипе.

Пӗринче тем пулчӗ чӗмсӗре,
Чарчӗ те — калать чӗтре-чӗтре:
— Эс те ман пекех ҫав, Андриян,
Тӗнчере ыр ҫын тӗлне пулман.

Ахальтен йӑваш-и эс ытла?
Е ятла мана, е ан ятла —
Ҫук никам та ырӑ сунакан...
Ӑраскал килет пӗр хӑвӑнтан.

— Ав епле?! Çук, тĕрĕс мар, мучи.
Тĕрĕс мар! Ак эп, чăваш ачи,
Техникум пĕтертĕм хулара,
Ырă çын пит йышлăччĕ вара.

Ырă çын кăвак Карелире
Пит нумайччĕ. Халĕ ак пире
Пĕрлештерчĕ, ырă çынсене,
Совет Çарĕ туслă çемьене.

Тăлăх мар тĕнче ыр çынсенчен,
Ырă тус-юлташ тупас тесен,
Эп, мучи, шутлатăп ак çапла:
Çыннăн хăйĕн çынлăх пулмалла!

## 4. ТӲПЕ ЧĔНЕТ

Вĕçме çуратнă пулĕ-çке шăпа.
Кĕтмен-туманччĕ — авиаци чаçĕ.
Военкомат кăтартнă маршрутпа
Призывниксем Совет Çарне каяççĕ.

Кам тĕлĕкре çӳле вĕççе курман,
Кам ача чух çунат тупас темен-ши?
Хитреччĕ Андрияншăн сĕм вăрман,
Анчах чуна тӳпе туртатчĕ темшĕн.

Мĕн пулнă-ши унта, çӳл тӳпере?
Каланă Иванов, чăваш поэчĕ:
Çук этемрен вăйли çак тĕнчере! —
Çав шухăша ун тĕрĕслес килетчĕ.

Стрелок пулса, чылай вĕççе курсан,
Иккĕленмесĕр, татăклăн, хăюллăн:
«Пулатăп летчик!» — терĕ Андриян,
Пуçларĕ вĕренме хавхалануллăн.

Вĕçев!
Малти кабина. Пĕр-пĕччен.
Паян вут-кайăк мар-и вăл —
Çунатлă!
Ытарайми илемлĕ çут тĕнче,
Хăй ывăлне курса,
Çупать пек алă.

5. ПАРНЕ

Çĕмрен пек, шăхăрса, çӳлелле,
Самантрах хĕвеле çитесле,
Шур тĕк евĕр, пачах палăрми
Ыткăнать реактивлă «МИГ».

Эх, паха! Мирлĕ çĕр — аялта.
Сумлă-çăкăрлă пурнăç унта,
Пин шăпа, пин телей, пин сас —
«Çĕрĕм-шывăм, эп саншăн хавас!»

Пĕр хут мар тӳпере Андриян,
Хăраса-аптраса тăман.
Чăн-чăн сывлăш хуçи вăл.
Анчах...
Чим, мĕн пулчĕ «МИГа» тăруках?

Сӳнчĕ двигатель. Вил—хускалмасть.
Газ парсан та, çынна пăхăнмасть.
Самолет çухатать çӳллĕшне,
Хăрушла çывхарать Çĕр енне.

Çĕр çинчен, ав, хушаççĕ: «Сик!»
«Эпĕ сикĕп. Анчах та — «МИГ»?
Ман мĕнле уйрăлас унпа,
Тӳпери тахçанхи туспа?»

«Сик!» — хушаççĕ каллех лерен.
«Çук, лартатăп «МИГа» хире!»

«Эс — пилот. Лăпкă пул чи малтан,
Вара тухăпăр йывăрлăхран...

Ак вăл — çăлăнăç пулĕ — кур,
Çĕр çинче тăрăхла лаптăк пур.
Çавăнта ман анса ларас.
Мĕн тăвас-ха — çĕре сухалас...»

Самолет анса ларчĕ «çемçен».
Умĕнчех — тип çырма иккен.
Тепĕр чух ик-виç утăм кăна
Вилĕмрен хăтарать çынна.

Çав самант паян кун та асра:
Строй умне кăларса паттăра,
Командир пилота парнелет
Ятне çырнă хитре сехет.

## 6. МУСКАВА

Хăвăртрах вĕçмелле,
Çӳлерех вĕçмелле!
Тĕпсĕр вар урлă сик,
Ишсе каç тинĕс урлă —
Вĕçекен кашни çыннăн
Çунатлă тĕллев,
Тĕллеве куракан
Хисепĕ те сумлă.

Тĕк тăмасть самана.
Шавласа, кĕрлесе,
Малаллах ыткăнать
Пирĕн çирĕммĕш ĕмĕр.
Çĕршывра сахал мар
Çивĕч ăслă çынсем:

Авă, спутник вĕçет —
Ĕнтĕ курăр та пĕлĕр!
«Ĕмĕртен туртакан
Çăлтăр çулĕ çине
Тухса куртăр этем,
Космоса тухса куртăр!» —
Çак шутпа хĕмленсе,
Паттăр летчиксене
Мускава пуçтарать
Королев — Тĕп конструктор.

Çав историллĕ кун
Халĕ уйрăм шутра.
Акă, тухтăр калать:
«Пур енчен те пит лайăх!»
Ĕненес-и е çук-и:
Пĕрремĕш отряд!
Чи пĕрремĕш —
Гагарин, Титов, Николаев...

## 7. АНСАТ-И КОСМОНАВТ ПУЛМА?

Ансат-и космонавт пулма?
Ак, центрифуга — чăн-чăн тамăк,
Е çӳлелле тăвать те тайлăк,
Е аяла каллех чăмать.

Кĕр барокамера ăшне —
Сана хĕссе лартать те сывлăш,
Ай тур-турах, аннеçĕм, пулăш! —
Анчах çумра лармасть анне.

Çав сурдокамера текен
Читлĕхĕнче эс ларса тух та

Ăс-пуçлă пул — калатăр тухтăр:
«Эс сывлăхлă çынах иккен».

Ансат-и космонавт пулма?
Тĕпче, вĕрен татти-сыпписĕр,
Спортпа туслаш.
                    Шăмшак хевтисĕр
Каяймăн çăлтăрсем курма.

Çак кăткăс тĕрĕслӳ кăна
Çӳле вĕçмешкĕн ирĕк парĕ,
Пуçри ăс-хакăл та чун тарĕ
Кăларĕç уçлăха сана.

## 8. ХИТРЕ-ÇКЕ ÇĔР!

Шавлать, юрлать Çĕршыв. Кĕрлет тĕнче.
Савăнăçне кам пытарма пултарĕ? —
Кăвак тӳпен инçе уçлăхĕнче
Пĕрремĕш хут — совет çынни Гагарин!

Эпир — çунатлă ĕмĕр çыннисем.
Пире çав ĕмĕре пилленĕ Ленин.
Çутта шанса, вăя виçсе-пĕлсе,
Совет çынни çав çӳллĕше çĕкленнĕ.

Вĕçет Гагарин тĕпсĕр тӳпере,
Вĕçет мир йыхравçи планета çийĕн:
Хитре-çке Çĕр, ытарайми хитре!
Мĕнпур вăйран ăна упрасчĕ пирĕн!

...Вĕçет Титов. Старт умĕн дублерне —
Андрияна куçран каларĕ Герман:
«Сан хăвăн та çак çăлтăр сехетне
Кĕтсе илес самант вăрах кĕттермĕ».

Вăл çитрĕ, çав самант.
Байконурта
Вăранчĕ август ирĕ çут хĕвеллĕ.
Ракета — йăлтăрти титан-çурта —
Тăратчĕ куç илме май çук илемлĕ.

Вăл çĕмрен пек тапранчĕ вырăнтан,
Çĕре кисрентерсе, хитрен тапранчĕ.
«Тавах шаннишĕн,— терĕ Андриян,—
Тавах, Çĕршыв, тавах, юратнă парти!»

...Шăп талăк иртрĕ. Иккĕн — уçлăхра!
Чи çывăх тус — Попович, кўршĕрех вăл!
Мĕн пултăр-ха хакли тăванлăхран? —
Салам! — тет Андриян,
Будьмо! — тет Павел.

Пĕрле çўренĕ Остерта тахçан
Ик тус, ик пĕлĕш—Пакрышень те Çеçпĕл.
Паян, пĕрне-пĕри курса, тĕлме-тĕл,
Вĕçет планета çийĕн ик тăван.

Хитре-çке Çĕр!
Илемлĕ Украина,
Чăваш çĕршывĕн тумĕ те хитре.
Мал ĕмĕтлĕ, хастарлă
ирĕк çыннăн
Ĕçчен алли илем кўрет çĕре.

Ик коммунист, çунатлă икĕ кăйкăр,
Совет çĕршывĕн сулăмлă чапне
Нихçан пулман шая çĕклеççĕ, курăр,
Сиксе вылян çут çăлтăр çўллĕшне.

## 9. ЁНЕН ПИРЕ

Хуркайӑк карти пек,
Ылмашӑнса,
космонавтсем
Орбитӑна тухаҫҫӗ.
Канма тесе каймаҫҫӗ
Космоса —
Унта тӗнче вӑрттӑнлӑхне
Шыраҫҫӗ.

Ай, ҫӑмӑл мар,
Тап-такӑр мар ҫав ҫул,
Ҫапах та ӗмӗт
Яланах ҫунатлӑ,
Хӑюллӑ пул,
Пӗр шиксӗр, чӑрсӑр пул,
Чи хӑюллин кӑна
Чӗри хӑватлӑ.

Пӑхатӑп эпӗ
Андриян ҫине.
Вӑл ик хутчен
Сӗм уҫлӑха хӑпарнӑ.
Вӑл курнӑ ҫывӑхран
Ҫӑлтӑрсене,
Вӑл аякран
Ҫӗр-аннене сӑнанӑ.

Ҫӗршывӑн паттӑр,
Харсӑр ывӑлне
Калатӑп эп,
Сума суса, хисеплӗн:
«Пире эс чӗнтӗн
Ҫӱллӗ тӱпене,
Чун ҫунатне сарма
Пире вӗрентрӗн.

Эс ёмӗт-тӗллевне
Курса-пӗлсе,
Ӑна парӑнтарма
Пултарнӑ кӑйкӑр,
Ёнен пире:
Вӑй-халлӑ чӑвашсем
Завод лартаççӗ,
Ӳстереççӗ çӑкӑр.

Пӳлеççӗ Атӑла
Хӑюллисем,
Ун хӑватне
Этемлӗхшӗн кӳлеççӗ.
Эс кур пире —
Шансам та ёненсем:
Кашни чӑваш çынни паян —
Вӗçевçӗ!

## ЮМАНВАР САЛТАКӖ

*Поэма*

### I

Этемӗн пур çуралнӑ кил,
Атте-анне тата пускил,
Тӑван-пӗтен, тӑхлач-хӑта,
Хушша кӗртмест этем юта.

Этемӗн сахал мар юлташ,
Ялйыш-тӑк — пурте
хурӑнташ,
Савӑнӑçа та мӑшкӑла
Этем пайлать ялйышпала.

Ял — пысăк вăй, сӳнми хăват,
Ял кар тăрсан, ĕç-пуç ăнать,
Пыл евĕр тутлă ун шăрши,
Ялйыш — Тăван çĕршыв.

Шутлатăн та: мĕскер вăл вăхăт? —
Ял варринчи лаштра юман
Пĕр виççĕр çул ларса та
шăпăрт,
Тен, пĕр турат та çухатман.

Чăваш сурпанĕ пек эрешлĕ,
Шур чуллă, хăйăрлă çыран
Çырмапала çаплах ентешлĕ —
Ни яшланман, ни ватăлман.

Каш! кашласа иртет-и çумăр,
Шур пĕлĕтсен çăра çилхи
Кăшт сирĕлет те — ӳкрĕ, курăр, —
Çич тĕслĕ пурçăн пиçихи.

Иртет-и хĕл, шыв-шур
шарлать-и,
Е хурăнсен çӳхе кăтри
Çилпе пăшăлтатса кашлать-и,
Е чăшăл кайнă-и çуртри,

Ялта юхать-и çепĕç юрă,
Шыв чуппи пек шăнкăртатса,
Е хӳхĕм хĕр уртать-и шура
Пĕркенчĕк, ыррăн пăлханса,

Туйра кĕсле юрлать-и хăвăрт,
Тухъя çапать-и шевлине —
Ылмашăнать кăна пек вăхăт
Улăштармасăр мехелне.

Ман Юманвар! Кунта
тискеррӗн
Нихҫан та вӑрҫӑ алхасман,
Кунта нихҫан тӑшман эшкерӗ
Вут сирпӗтсе тӑхлан тӑкман.

Тен, ҫавӑнпа кӗмсӗртетмесӗр
Шӑвать ун пурнӑҫӗ хуллен,
Саманаран юлас темесӗр,
Юлас темесӗр кӳршӗрен?

Анчах та самани васкавлӑ,
Анчах кӳрши ӗҫчен, хастар,
Лӗпсӗртетес пулсан кахаллӑн,
Ҫын куласси нумай та мар.

Хӗм сирпӗтен ман Юманварӑм,
Нихҫан пулман эс ҫын кулли,
Вӗри чунсен сӳнми кӑварӗ —
Атте-асаттесен йӑли.

Пӑхап та юман пек ҫӗкленнӗ
Тӗреклӗ Юманвар ҫине,
Телей уҫҫи валеҫнӗ Ленин
Тухать асамлӑн куҫ умне.

Чӑмӑртаса чи вирлӗ парти,
Вӑл курнӑ аслӑ ҫул-йӗре:
Тӗнчен тӗп вӑйӗпе хӑвачӗ —
Рабочире те хресченре.

Мул хуҫисен шутлавлӑ кунӗ
Вӗҫленмеллех хӑҫан-тӑр. Ку —
Аталанан кунҫул саккунӗ,
Мул хуҫинчен килмен саккун.

...Шутлатăн та: мĕскер вăл
вăхăт? —
Ял варринчи лаштра юман
Пĕр виççĕр çул ларса та
шăпăрт,
Тен, пĕр турат та çухатман.

Анчах этем! Вăл урăх, урăх!
Манми Октябрь кунĕнчен
Хулпа пĕрле çунат та пур ун,
Хĕвел те пур ун чĕринче!

Йăлтăртатса ахах-мерченĕн
Хумханакан парка тырра
Пуçтарнă чух ялйыш ĕçченĕн
Мăнаçлă туйăм пур чунра.

Утать-и вăл тăван вăрманăн,
Сăнать-и Атăла вăрах, —
Вăл ыталать çĕре: ку манăн!
Ку пирĕн, халăхăн йăлтах!

Чăн ирĕклĕх мĕнне ăнланнă,
Тивлетлĕ пурнăç техĕмне
Юнпа туйса, чунпа туптаннă
Çын вăйсăр пулмĕ ĕмĕрне.

II

Этемпеле этем пулсан,
Вăл саншăн тăванран тăван.
Нихçан манмасть этем ырра,
Ырра усрать этем ăшра.

Анчах пĕрре суяс пулсан,
Е хапсăнсан, е хăмсарсан,

Этем усал, этем хаяр,
Этемшĕн вилĕм те ним мар.

Тăван яла хураллакан
Чул палăк калаçас пулсан,
Пăхса мĕнпур ялйыш çине,
Çапла вăл уçĕччĕ чунне:

Ман Юманвар! Кунта тискеррĕн
Нихçан та вăрçă кĕрлемен,
Кунта нимле тăшман эшкерĕ
Тăхлан тăкман, вут сирпĕтмен.

Эп утнă чух çĕр хăй кисренĕ.
Эппин тăратăп-ха мĕн-ма?
Ман, çĕр çыннин, илес те сенĕк,
Уяваскас капан хывма.

Ман, ылтăн алăллă чăвашăн,
Тытас та пуртă — çурт тума,
Тăван-пĕтенĕн, кӳршĕ-аршăн
Керменĕ «ярĕччĕ» юмах.

...Шăвать, шăвать кунçул
карапĕ
Шав малалла, шав малалла,
Ак ĕнтĕ хĕрĕх çул тăрап эп,
Пĕр автоматăм — ик алла.

Тăратăп. Сассăр, хускалмасăр.
Кашни килтех çуралнăран
Ята-шыва манса каймасăр
Мана савать мĕнпур тăван.

Киле çитме пӳрмен çĕр çирĕм
Яш йĕкĕт ячĕпе мана

Паян савать ёлккен уй-хирĕм,
Ачаш хĕвел лăпкать чуна.

Умра — чечек, чечек таттисĕр:
Юн пек хĕрли, юр пек шурри...
Ытахальтен кăна-и, чимĕр,
Ялйыш юратăвĕ вĕри?

Тăват çулта ун пур ылханĕ,
Кӳтсе çитсе пĕр самантра,
Кăвак хуппи пек çурăлман-и,
Чăтман-и ялăм вут-шара?

Ан тив, çичютăн сивĕ хĕçĕ
Сулăнайман та ку енне.
Аша-чикке витернĕн çĕçĕ,
Вăл каснă, вăрçă, чĕрене.

...Çул шучĕпе хамран та аслă
Хĕр-ывăлпа мăнук паян
Çак çĕр çинче тăрать мăнаçлă
Ĕç-пуçĕ чаплă пулнăран.

Çурт купалать-и, сад чĕртет-и,
Вырать-и тырă уй-хирте,—
Манса каймасть ялйыш пĕрре те
Ман çут çунатлă ĕмĕте.

Сан ывăлу эп, Юманварăм,
Чĕрем ĕçленĕ чух хĕрӳ,
Сан умăнта пĕртен-пĕр парăм
Ман пулнă — Аслă Çĕнтерӳ.

Ман пулнă пĕр тĕллев —
Çĕршывăм
Ильич кăтартнă Ырана

Хăватлăн, уççăн, чĕррĕн-
сыввăн
Пĕрмай васкатăрччĕ кăна!

III

Этем килет те тĕнчене,
Чи тĕп сăмахĕ ун — «анне».
Çын ырлăхра та хурлăхра
Аса илет çав сăмаха.

Анне! Пур тĕрлĕ инкекрен
Хӳтĕлекен мĕн пĕчĕкрен.
Анне! Кăвар пек çунакан,
Чунне парса, ыр сунакан.

Чул палăк калаçас пулсан,
Салтак ват амăшне курсан,
«Аннеçĕм,— тейĕччĕ,—аннем,
Çывхар-ха, итлесем:

Эс хĕрĕх çул кĕтетĕн
Çухалнă ывăлна,
Унчченхиллех чĕнетĕн,
Пепкем тесе мана.

Эс хĕрĕх çул çӳретĕн
Çак чул салтак патне.
Эс хĕрĕх çул хӳхлетĕн,—
Каçар мана, анне.

Инкек кӳрес теменччĕ
Сана эп нихăçан,—
Ытла та сĕмсĕрленчĕ
Çав çул пуçтах тăшман.

Пӳлсе лартма пикенчĕ
Пур çутă шухăша,
Кĕмешкĕн хатĕрленчĕ
Вăл иксĕмĕр хушша.

Сана, аннем, вăл сĕнчĕ
Йăлмак та вут-кăвар,
Тӳрех сана вăл чĕнчĕ
Мадонна тесе мар.

Эс коммунист çуратнă
Çак çутă тĕнчене,
Шăп çакăншăн, куратни,
Эс айăплă, анне.

Ман хамăн та малашлăх
Хĕвелсĕрччĕ, хура.
Тăшман мана яланлăх
Тăвасшăнччĕ чура.

Аннем! Аннем! Мăнтарăн,
Эс пăхрăн та куçран,
Куçу калать: «Пуçтарăн»,
Аллу сĕнет шăрттан.

Чĕрӳ калать: «Ан парăн,
Ан чак эс каялла»,
Сăну: «Кĕтетĕп, таврăн
Çĕнтерӳпе яла».

...Эп çак пиле пăсмарăм,
Чакмарăм эп, анне,
Вилсессĕн те ямарăм
Тăван çĕршыв ятне.

Йӳç тĕтĕмпе чыхланнă
Смоленск таврашĕнче

Тăшман, тискер çăханăн,
Вĕçетчĕ пуç çинче.

Кайран—шуйттан илесшĕ,
Танксем, танксем, танксем,
Ватасшăн, çĕмĕресшĕн
Шав сĕкĕнчĕç вĕсем.

Йыш нумай марччĕ пирĕн,
Вăй-хал — сахалтарах,
Анчах... тăван уй-хирĕн
Çичют килет пуçтах.

«Тапранăр! Вилĕм тăкăр!
Коммунистсем эпир! —
Шăп ман пекех вунтăхăр
Çултаччĕ командир.

Вăл юрататчĕ аслă
Тăван Раççей çĕрне,
Курасшăнччĕ хаваслă
Ялан хăй амăшне.

Анчах... кĕтни пулмарĕ...
Атака хĕрнĕçем
Снаряд пĕртте юлмарĕ,
Йăванчĕç... юлташсем.

Пĕртен-пĕр май — граната
Чарма çынçиене.
...Эс ман умрах тăраттăн
Çав самантра, анне.

Чĕрӳ калать: «Ан парăн!»
Сассу кĕрет чуна:
«Эс мар-тăк, кам-ха чарĕ
Çак урнă тăшмана?»

Эп илтӗм хӑрамасӑр
Граната ҫыххине,
Ним тӑхтаса тӑмасӑр
Эп чӑмрӑм танк айне...

Ҫав самантран каҫ-ирӗн
Вутла ҫунать чӗрӳ,
...Йӳне лармарӗ пирӗн
Ҫак Аслӑ Ҫӗнтерӳ.

IV

Этем ӳсет, вӑй-хал илет,
Ҫут тӗнчене илем кӳрет,
Пӗрре, асамлӑ ҫуркунне,
Туять вӑл юрату мӗнне.

Хӗрӳ вут-ҫулӑмлӑ чӗре
Сиксе тапать вунҫиччӗре.
Этем ҫак аслӑ туйӑма
Нихҫан та памӗ таптама.

Чул палӑк калаҫас пулсан,
Салтак хӑй савнине курсан,
«Чӗреҫӗм,— тейӗччӗ,— килех,
Итле мана, итле:

Юман ҫулҫи вӗлтӗртетет те
Ҫил ҫук чухне шӑпах пулать.
Юман пире аса илет те
Салхуллӑн пуҫ усса тӑрать.

Ун айӗнче, тен, ларнӑ пинӗн,
Юман, тен, маннӑ хӑшпӗрне,
Анчах асрах усрать вӑл пирӗн
Асамлӑ аслӑ каҫсене.

Савниçĕм, чунăм, кăвак куçăм,
Çут кĕмĕл саслă юррăм ман,
Эс халĕ те, чипер Маруçăм,
Мана кĕтсе, качча тухман.

Юман патне куллен çӳретĕн
Çил-тăманра та сивĕре,
«Ванюк кунта килмен-ши? —
тетĕн,—
Çĕркаç тем сисĕччĕ чĕре».

Хĕл пуçлансан, хыпса çунатăн:
«Ванюк, шăнмасть-и сан уру?
Сыхла хăвна, сыхла,
çунатăм»,—
Çыратăн адрессăр çыру.

Эс хĕрĕх çул мана шыратăн,
Ку сан е манăн айăп мар,
Вута та кĕрĕттĕн, шыва та,
Манран çеç пултăрччĕ хыпар.

Анчах эп çук. Пĕр пĕчĕк тушăн
Шăп Сталинград таврашĕнче
Кĕрешнĕ чух телейлĕ куншăн
Куçран çухалчĕ çут тĕнче.

Тăшман асар-писер вут тăкрĕ
Туртса илесшĕн Атăла.
Тĕлĕнмелле — епле çĕр чăтрĕ,
Епле каймарĕ çурмалла?

Совет Союзĕн гражданинĕ,
Ятне çӳлте тытса çав ир,
Чăвашĕ, вырăсĕ, грузинĕ —
Пĕр шухăш тытрăмăр эпир:

«Кунçулĕ вăрăм савнă çĕрĕн,
Раççей хальччен чура пулман,
Раççейĕн паттăр ывăл-хĕрĕ
Вилет те—парăнмасть нихçан!»

Арăслан пек тăратпăр хирĕç —
Ăçтан тухать-ши вăй-хăват?
Чуна вырнаçнă аслă тивĕç
Эс пултăн мар-и, Сталинград!

Çак вăй-хăват, çак пĕтĕçӳлĕх,
Çĕр кисренни, шыв пăтранни,
Чи çирĕп тимĕр те хĕрӳллĕ
Вутра çатăртатса çунни,

Тӳпе мăкăрланни, хаяррăн
Снаряд е бомба çурăлни...
Çук, шарт сикмерĕн, хăрамарăн
Эс, вилĕмсĕр совет çынни!

...Каçар, савни, таврăнаймарăм.
Ан айăпла, ан вăрç мана,—
Эп малалла кайма памарăм,
Эп чартăм ирсĕр тăшмана.

Ан тив, кун ирттĕр, çул ăсантăр—
Хĕвел кулса вылянă чух
Ман тӳрĕ ĕçĕме нихçан та
Тĕнче те, эс те манас çук!»

V

Пускил чысне, ялйыш ятне
Этем ӳкермĕ ĕмĕрне.
Ниçта та чăн-чăн этеме
Нимле хăват çук çĕнтерме.

Тăратăп палăк умěнче,
Йěри-тавра — хитре тěнче.
Кашни, фронта тухса кайни,
Вăл пулнă чăн-чăн çěр çынни.

Илтеп хуткупăс сассине,
Илтеп ентешěн юррине.
Вăл çывăхрах, вăл юнашар,
Итле-ха, Юманвар:

«Алран кайми аки-сухи,
Асран кайми атти-анни...
Юрла, хуткупăс, сирěлейтěр
Салтакăн пур хуйхи-суйхи.

Юрла Тăван çěршыв çинчен,
Юратнă Юманвар çинчен,
Ун аслă улăп пек хăватлă
Çěр çирěм паттăрě çинчен.

Чун кěртнě çуркунне пулсан,
Çěр çирěм яш ěçе тухсан,
Уй-хир хавасланса выртатчě
Хăйне ача пек пăхнăран.

Тырпул ӳстернě аллăмпа
Пăшал тытса, тăван ялпа
Уйрăласса нихçан кěтменччě,
Мěн тăвăн? Çавнашкал шăпа.

Юманварсен йăли çапла:
Йыша тухсан, ятна хакла,
Вут сирпěтсе ěçле, ěçлес-тěк,
Вăрçас-тăк — чăн-чăн паттăрла.

Салтак нуши, салтак хуйхи —
Тěп пул, фашизм,— тěнче хухи,

Ман хамăн пурччĕ пысăк
тунсăх —
Асран кайми аки-сухи.

Çав тунсăх пачĕ пуль вăй-хал,
Вутра юн тăкрăм-и сахал? —
Ӳкмерĕм. Ĕмĕр пултăр. терĕм,
Тырпул ăстиллĕ тăван ял.

Анчах... Тăхланăн кусĕ çук —
Вĕçленчĕ манăн вутлă çул.
Чи юлашки самантăм пулчĕ
Берлиншăн пынă çапăçу.

Миçе çĕршыв мана кура
Ирĕклĕхе туять, ырра.
Сăмахăм вĕсене: «Хисеплĕр
Чĕр пурнăç пиллекен тырра!

Ытла та пысăк хакĕ ун,
Кашни пĕрчи виçеллĕ ун —
Çĕр çирĕм пурнăç Юманварăн,
Çĕршывăн — темиçе мĕльюн».

Калатăп пĕтĕм халăха,
Ан манăр манăн сăмаха:
«Телейшĕн, миршĕн
кĕрешмешкĕн
Ан чарăнăр самантлăха!»

VI

Шăпланăр!
Самана шавне,
Кунçул шавне —
Илтетĕр-и? —

Çурса тухать, ав,
Ял çине
Пуç хунă салтаксен юрри:

«Пехил сана, Çĕршыв!
Çеçкеллĕ, ешĕл çулçăллă
Çурхи хĕвеллĕ кун пек
Чечеклен.
Эпир çак çутă куншăн
Вутлă-çумăрлă,
Чи тертлĕ вăрçăра
Ахаль вилмен.

Пехил сире, яшсем,
Хĕрсем.
Алла илсе
Мухтавлă пурнăçăн
Телейлĕ уççине,
Чечекленен çĕр тăрăх
Тулли ывăçăн
Сапалăр
Чаплă ĕмĕр вăрлăхне!

VII

Ман Юманвар! Кунта тискеррĕн
Нихçан та вăрçă алхасман,
Кунта нимле тăшман эшкерĕ
Вут сирпĕтсе, тăхлан тăкман.

Анчах чи вăйлă, чи хăватлă
Çăлавçă пек—патвар, яштак —
Юманварта тăрать ыр ятлă
Чи çутă ĕмĕтлĕ салтак.

Тырпул ăстин, чи лайăх вăйçăн,
Ыр ĕмĕтне пĕтернĕрен

Тĕллет салтак хăрушă вăрçă,
Ылханлă вăрçă куçĕнчен.

Пĕлетĕп эп: Тăван çĕршывăн
Çак Юманварĕ сывă чух
Вăл хăй те ĕмĕр-ĕмĕр сывă,
Вăл хăй нихçан та аптрас çук!

## ТЫМАР

*(Поэма сыпăкĕсем)*

Чылайранпа кунта
Хуткупăс илтĕнменччĕ,
Чылайранпа
Тĕнкĕлтетменччĕ-ха тăмра,
Килчех-шим авалхи
Йăла-йĕрке сехечĕ? —
Йĕс хĕлĕхсен сасси
Янрать ман ялăмра.
Янрать мĕн иртенпех
Хушпу тенкин шăнкравĕ,
Улма-чăпар,
Тăпăртатса, пуçне ухать,
Мăнаçлă утăн —
Таврари ялсен мухтавĕн —
Çилхи çинче
Тĕрленĕ тутăр вăркăшать.
Мĕн иртенпех
Ман чĕрере хĕвеллĕ, çутă,
Канма тесе
Килсеттĕм эп тăван яла,
Ирпе ирех тăрса эп тухрăм —
Çукчĕ чăтăм,—

Ик куç туллин
Çак туй-çуя ман курмалла.
Хĕвел ташлать,
Хĕвел сиксе ташлать, атьсемĕр!
Пĕр вирхĕнсе,
Пĕр чарăнса юрлать тăри.
Туй çеммипе
Килĕштерсе юхать, илтсемĕр,
Çак аслă-аслă
Çутçанталăкăн юрри.
Мĕн пулчĕ-ха,
Асаттесен хăватлă çĕрĕ?
Çăлкуçсенчен
Тапса тухать-и кĕмĕл шав?
Епле ăна
Эс сыхласа упранă чĕррĕн?—
Типтерлĕн упрама
Пултарнă пулĕ çав.
Утатăп эп.
Çумра чĕкеç çуначĕ мар-и?—
Пĕр çĕкленсе,
Пĕр яранса утатăп эп,
Эй, шукăль сăнлă,
Ешĕл тумлă Хурăнварăм,
Сана паян эп
Палласа та илеймеп.
Кур — йĕркерен,
Урамĕпех шап-шурă шифер,
Шап-шурă çурт та
Чĕнтĕрленĕ сар хапха.
Эй, ĕлĕкхи,
Эй, чĕлтĕрти Мăчавăш шывĕ,
Мĕнле майпа эс
Пысăк кӳлĕ пултăн-ха?
Сана тахçан
Ахрат çырми тесе калатчĕç,

Ахрат тесен,
Ача та, ватă та хăрать.
Мăчавăш шывĕ!
Мĕнлерех вăй-хал тивлечĕ
Сана вĕр-çĕнĕ сăн
Пиллерĕ-ха вара?
Сĕвек çыран çинче
Çăра йăмра та çирĕк,
Сывлать-шим шыв? —
Çĕклем-çĕклемĕн шур тĕтре,
Хуркайăка чĕп кăларма
Кунта пит ирĕк...
Ир тăнă ялăм!
Эс паян ытла хитре.
...Туй кĕртнĕ çурт умне
Эп çитрĕм çĕкленӳллĕн.
Хапхи яр-уçă —
Председатель пӳрчĕ-çке!
Кĕтменччĕ эп:
Çак лутака та çирĕп пӳллĕ,
Ответлă çын
Ялта пуçланă «кĕмсĕркке».
Мана курсан,
Хĕпĕртесе йăл кулчĕ пуçлăх,
Мана курсан,
Чупсах вăл тухрĕ пӳртĕнчен:
— Калаççĕ-ха,
Вăрман хăлхаллă та уй куçлă,
Эс килнине çапах
Никам та пĕлтермен...
— Тем мар, тем мар,
Хисеплĕ тусăм председатель,
Сана курмасăр
Чăтаймастăмччĕ çавах,
Санпа эпир
Çуралсанах пĕр çăвартанччĕ,—

Пĕр ĕмĕт, пĕр тĕллев,
Пĕр шанчăк, пĕр сăмах.
Пĕлтер мана,
Пуçна ăçтан килсе çакланчĕ
Çак шухăш — туй?
Çак ĕлĕкхи сăрнай кĕвви?
Кун пек ĕçре
Унччен эс сӳрĕк пулаканччĕ,
Сана чунтан
Тарăхтаратчĕ-çке кивви.
— Эй, ан кала...
Арккуш Артак кивве нихçан та
Касса ярас та
Тымарне кăклас темен.
Тĕн-тĕшмĕше вара
Пуçран шăлман, чăнах та,
Ан шутăр, тенĕ,
Ялăмра хура çĕлен.
Туй-çуйĕ ку...
Ялти клубри фольклор ансамблĕ
Çак шухăша килсе
Пĕлтерчĕ-ха пире...
Несĕлсемпе пĕрле
Ларатпăр пек ак халĕ,
Ара вăл, туй тени,
Пулать вĕт-ха пĕрре.
...Кĕрекере,
Туй пуçĕнче — çап-çамрăк мăшăр.
Артак тĕпренчĕкĕ —
Энтри те çĕнĕ кин.
Куçа илми
Пăхса тăратăп та пĕр хушă,
Тухса тăрать
Ăсаннă яшлăх ĕмĕлки.
Аса илме,
Ав, пулăшать Исмет Кондрашкин,

Хуткупăс çеммипе,
Ташша тухса, уксах Исмет
Такмак калать.
Çынсем пӳлеççĕ те: «Ан ашкăн»,—
Исмечĕ чарăнмасть.
Вăл чĕрене йĕртет:

— Тăрăс-тăрăс сикер-и,
Уратине хуçар-и?
Икĕ ура пур чухне
Çапла сиксе пулмарĕ.
Эй, юрлар-и, ташлар-и,
Куçран пăхса тăрар-и?
Яш ĕмĕрте çамрăк хĕрпе
Çуммăн ларса пулмарĕ.
Эй, ĕçер-и, çиер-и,
Йăлтах аса илер-и?
Арăслан пек тусăм пурччĕ—
Пуçне фашист тĕплерĕ...

Савăнăçпа куççуль
Пĕр туртарах çӳреççĕ,
Çав лавăн ячĕ —
Пурнăç терĕмĕр пулсан,
Асаилӳшĕн
Поэта ан вăрçчĕ эсĕ,
Ман чăтăм-тӳсĕмлĕ
Тăванăм, вулакан.

⁂

Кĕнекере çыраççĕ:
вăрçă пулнă.
Кино куратпăр:
вăрçă вăл — хаяр.

Тен, çитĕ ун çинчен?
Тем айăп тунăн,
Хама пӳлме хăтлантăм пĕрре мар.
Анчах та, чим...
Епле тӳсес-ха манăн? —
Çĕркаç та эп вăрантăм
шарт сиксе,
Пуçран каллех
хăрушă Ухтиванăн
Юман туйи ан лектĕрччĕ тесе.
...Шыçатпăр выçлăхра,
серте кавлетпĕр,
Пучах пухас тесе,
хире тухсан,
Пире кĕтсех тăратчĕ —
кам-ха, тетĕр? —
Хирсен хаяр хуралĕ — Ухтиван.
Арккуш Артак —
чи çывăх тус-юлташăм,
Вăрçа пула тăп-тăлăх юлнăскер,
Пиртен кăшт аслăскер,
ача-пăчашăн —
Чапай,
пире сыхлатчĕ чип-чипер.
Эпир унпа ăсан тытма пултарнă,
Партас çаклатнă пĕчĕк пĕвере...
Анчах пĕрре...
Пĕтетчĕ вăл, мăнтарăн,
Çап-çамрăклах кĕретчĕ пуль çĕре.
Лапам хирте çӳрерĕ лобогрейка,
Ик-виç кунтан пĕтерчĕ те çулса,
Хĕрарăмсем —
Колхозлă тыл тĕрекĕ —
Наччас хăварчĕç суратсем туса.
Пĕр йăпшăнса,
Пĕр пытанса выртатпăр,

Ан систĕр, тетпĕр, Ухтиван-хурал,
Пĕр пăтăлăх тесе,
пучах шыратпăр,
Кăштах вăй илĕ, тетпĕр, ал-ура.
Пир хутаҫҫа улт-ҫич пучах хуманччĕ,
Сасартăк сиксе тухрĕ те таҫтан
Арккуш янаххинчен тивертрĕ ячĕ
Хултуйипе ҫак чăрсăр Ухтиван.
Паян та асăмрах юлташ сăн-пичĕ,
Хĕп-хĕрлĕ юн юхать пучах ҫине.
Сăмахĕ ун —
эх, кам ҫавна илтинччĕ! —
Сăмахĕ ун чуна ҫурать:
— Анне!
Ни ашшĕ те, ни амăш те илтеймĕ
Ун сăмахне.
Ял ывăлĕ — Артак.
Халь, ун ҫине пăхса,
епле ҫӳҫенмĕн? —
Яш хăва пек тӳрленчĕ те пăртак,
Вăл тӳнчĕ.
Ун патне пыма хăймасăр,
Ҫак урнă хуралтан сехĕрленсе,
Чăмăрсене чăмăрласа тăратпăр,
Шăла ҫыртса тăратпăр, чĕтресе.
Леш «пуҫкасанĕ» ун патне ҫывхарчĕ,
Сар хăмăлпа шăлса хăй туйине,
Хыпаланса, йĕтем енне уттарчĕ,
Ҫул тăрăх кăшкăрашрĕ хăйĕннех:
— Вĕрентĕп эп сире пучах йăтмашкăн,
Кăтартăп ҫаратма фронт тыррине!
...Арккуш Артак ҫĕкленчĕ те хăяккăн
Сурат ҫине силлерĕ пучахне.
Силлерĕмĕр эпир те.
...Выҫă шăплăх
Тăратчĕ урараан ӳкересле.

Ах, вăрçă, вăрçă —
çивĕч-çивĕч шăллă
Хăрушă кайăк.
Эс — хура тĕслех.
...Çук, Арккуша ялйыш пĕтме памарĕ:
Сыватрĕ те ӳстерчĕ чиперех.
Вĕрентрĕ.
Салтака кайран ăсатрĕ,
Туйне те турĕ паянхи пекех.
Сĕтел çинчи сĕт-турăхĕ, аш-пăшĕ
Чылай сахалччĕ те паянхинчен,
Çапах та кĕреке пулманччĕ пушă,
Ялйыш хисепĕ хаклă-çке нимрен.
Çав хисепе ăша хывса, хĕрӳллĕн
Ĕçлерĕ вăл, вĕренчĕ тимлесе,
Хурăнвара хастарлă та пĕлӳллĕ
Этем пулса çĕклесчĕ-ха тесе.
Пĕр пухура каларĕç: «Председатель
Ял ывăлĕн — Артакăн пулмалла...»
Ун чух Арккуш шăп çирĕм улттăраччĕ,
Паян Артак çитсе пырать алла.
Эй, унтанпа миçе хутчен Мăчавăш
Шатăртатса тасалчĕ пуль пăртан!
...Тасан, хитрен, сăпайлăн, вăтанса кăшт
Кин-агроном пăхать паян куçран.

*

— Эй-эй, поэт,
Каллех пин тĕрлĕ шухăш
Сан пуçунта.
Хĕрхен ăна пăртак.
Канар паян.
— Атя, мана та пулăш
Чун канлĕхне тупма,—

Сӗнет Артак.—
Туй кӗреки халь
Пирӗнсӗр та шавлӑ,
Лаша ҫине ларар та —
Уялла.
Кӗнекесем ҫырсах
Кукша ҫамкаллӑ,
Кӑвак ҫӳҫпуҫлӑ
Юлтӑн пулмалла.
...Самант — ҫӗр сирпӗтсе пырать
Анкайлӑн
Тӑван хир тӑрӑх
Хӳхӗм урхамах.
«Чун канлӗхӗ...»
Ав, кур, ӑҫта вӑл санӑн,
Ав, кур,
Ӑҫта тупатӑн эс ҫӑтмах.
Пӗкке хуплать
Сап-сар ыраш пучахӗ,
Парка пучах
Шитрен те ытларах.
— Артак асамҫӑ, теҫҫӗ.
Ку чӑнах-и?
Артак, ним пулман пек, калать:
— Чӑнах.
— Тӑкӑнас пек ларать вӗт-ха
Ыраш,
Вырма, ав, тухнӑ
Кӳршӗ колхозра.
Эс пур — туйра сикетӗн...
Вӑхӑт мар-ши?
— Ҫук вӑхӑт мар ҫав.
Вӑхӑчӗ — ыран.
Пӗлетӗп, ҫӳлтисем те
сехӗрленнӗ,
Процент пымасть

Эпир кăшт кĕттерсен.
Çапах чĕнмеççĕ.
Хăнăхнă, вĕреннĕ —
Хурăнварсем
Процентшăн ĕçлемен.
Чи аслă ĕмĕт ялшăн —
Пысăк тухăç.
Çав тухăç пуянлаттăр пурнăçа.
Ытти вара... «асамçă-и е юмăç» —
Ĕç тăваканшăн
Пурпĕр мар-и çав?
— Çук, пурпĕр мар.
Асамçă вăл — асамçă.
Таçтан пăхса,
Йăлт витĕр куракан.
— Эппин, вĕсем
Хурăнварта пурнаççĕ,
Ăсне илеççĕ
Çутçанталăкран.
Ак кур, уйра вĕçет
Ĕçчен хурт-хăмăр,
Сăпса пек
Пĕчĕкçеççĕ те ытла
Ăспуçлă хăй.
Ăна, май пур-тăк, хамăр
Рете хаваслансах йышăнмалла.
Ăна эпир
Сума сумашкăн тивĕç —
Чечек тусанпала шăркаланать.
Çунат çинче
Тĕштырă, утă, çимĕç
Çав хурт йăтса çӳренĕн туйăнать.
Сăпса та, кайăк-кĕшĕк те,
чĕрчун та
Тытса тăраççĕ çутçанталăка.
Çавна манса,

Пĕр утăм йăнăш ту та —
Ним мар каллех
Эс юлăн тăлăха.
Паян пуяс тесе,
Тултар та хими
Уя-хире е ешĕл вăрмана,
Кайран ни çăкăр эс,
ни мăйăр çимĕн,
Пулла çӳреймĕн
çывăх çырмана.
Манатпăр-çке çак чăнлăха,
манатпăр,
Паян чапа тухасчĕ пулинех —
Хашка-хашка тарлатпăр,
«Вал» тăватпăр,
Каçарĕ пурпĕр, тетпĕр,
Çĕр-анне.
Çĕр каçармасть.
Ун пур хăватлă сисĕм,
Çын ăшшине туйса илсен кăна
Чечекленме пуçлать вăл илĕм-тилĕм,
Хăй ырлăхне йăлтах парать çынна.
Шăп çавăнпа
Хир-вăрмана сыхлатпăр.
Вĕçет тăрна.
Тăри, ав, шăхăрать.
Ёрчет вăрман илемĕ —
пăши-паттăр,
Утмассерен мулкач сиксе тухать.
Куратăн-и,
Ав, пĕвесем мĕн чухлĕ,
Сасан та карп вылять
кĕтĕвĕпех,
Çырансенче — вăрман.
Эрози çулĕ
Тăп чаранчĕ.

Алхасаймасть текех.
...Эп хамăн ик куçа ĕненейместĕп.
Çул тăрăшшĕпе шутлатăп тĕлĕнсе:
«Ăçта-ши çак илем тымарĕ?» —тетĕп.
Тус куçĕнчен пăхатăп тĕсесе.
Сасартăк — юрă!
Тăваллă, хăватлă!
Юмах-и?
Çук, çапах та юмах мар —
Сăрт хыçĕнчен çĕкленчĕ
Çич çунатлă
«Буденный çыннисемлĕ»
Утлă çар.
Илтетĕп:
«По долинам и по взгорьям...»
Асаттесен хĕмне асилтерсе,
Янрать пĕр ушкăн
юланутçă хорĕ,
Мĕнпур тавралăха кисрентерсе.
— Мĕскер-ха ку?
— Истори ку, тăванăм.
Лăплан-ха эс,
Тăнла, итле пăртак,—
Мана пӳлсе,
Çут тĕнчене те маннăн,
Çак юрă ытамне чăмать Артак.
Юхать уй тăрăх
Ĕмĕр чĕрĕ юрă,
Итлет Артак —
Ан кансĕрлер текех —
Епле ун сăнĕ шухăшлă —
Тек урăх
Çак юрăран чапли те çук пекех.
...Инçе-инçе кайса,
Шăпланчĕ кĕвĕ,
Артак сăмах хускатрĕ пăртакран:

— Историпе пĕрлешнĕ
асла тĕвĕ
Çĕрпе çынна уйăрас çук нихçан.
— Мĕн пулчĕ ку?
— Ку эскадронччĕ пирĕн.
Çак ырлăх мĕн хакне пĕлес тесе,
Çӳрерĕç-ха ял ачисем каç-ирĕн,
Курса, тытса пăхса та тĕпчесе.
Аваллăхĕ асаплă-çке çак çĕрĕн —
Мĕн чухлĕ юн,
Мĕн чухлĕ тар унта!
Çавна ăша хывсан ялти яш-кĕрĕм,
Вăл çул çухатмĕ,
тăрăшĕ чунтан...
...Артак каланине ирпе ăнлантăм,
Шăпахчĕ Хурăнвар.
Сасартăках —
Вуншар мотор,
Асар-писер хăватăн,
Пуçларĕ кĕрлеме пĕр тăруках.
Тапранчĕ тейĕн
татăклă атака
Тырпулшăн, Çын телейĕшĕн...
Пăхсан,
Лара-тăра пĕлмен Арккуш Артакăн
Сăн-питĕнче эс маршала куран.
Атакăра —
Вуншар комбайн та трактор,
Вуншар автомобиль,
вуншар лаша.
«Буденный çыннисем» —
Аван паллатпăр,
Кин-агроном, ав,
Хутшăнна йыша.
Штурвал умне ларать
хастарлăн, çирĕп

Артак тĕпренчĕкĕ — Энтри паян.
Эс тĕрĕсле ăна, тăван уй-хирĕм,
Вăй пар ăна
Сĕтеклĕ тымартан!
...Утать уй тăрăх
Лăпкăн та тĕреклĕн
Артак, çĕнелнĕ çĕршĕн савăнса,
Çĕнелнĕ çĕрĕ
Ăшă та кĕрпеклĕ,
Çап-çутă кунăн
Сывлăшĕ таса.
Утать Артак.
Куç виçейми пуянлăх
Ĕçре хастар пулнишĕн —
Пысăк чыс.
Утать Артак — мал ĕмĕтлĕ,
сулмаклă,
Хăюллă,
Çутă чунлă коммунист.

## ТУПМАЛЛИ

«Килĕшет мана çак çăвăн ырă кăмăлĕ...» . . . 3
Çăл чаватпăр . . . . . . 4
Кун иртнĕçемĕн... . . . . . —
Çынна ырă ту . . . . . 5
Пурăнатăп Атăл хĕрринче . . . 6
Ун ячĕ—Ленин . . . . . . 7
Хĕвеллĕ май . . . . . . 8
Анне тĕрри . . . . . . —
Ухсай Яккăвне . . . . . . 9
Чун пур-ха, тетĕп... . . . . 11
Тĕлĕкпе чăнлăх . . . . . . 12
Çарăк ĕшни . . . . . . —
Август . . . . . . 13
Çтуппан тете . . . . . . 14
Ĕненетĕп çынна! . . . . . 16
Çĕнтерӳ кунĕ . . . . . . 18
Пĕлетĕп... . . . . . . 19
Художник, ăнлантар мана... . . . —
Музыка . . . . . . 20
Чунăр пур-и? . . . . . . —
Куç пек упрар . . . . . . 21
Туслăх юрри . . . . . . 22
Чернигов . . . . . . 23
Репьях юрлать . . . . . . 24
Килех, Çĕнĕ çул! . . . . . . 26
Сăмах (Баллада) . . . . . . 27
Уйрăлу вальсĕ . . . . . . 28
Шелепие . . . . . . 29
Килсе курăр уява . . . . . 30

«Пуррине упрама пĕлейместпĕр...» . 31
Пĕр юлташа . . . . . . . 32
«Куçран калас—вут-тăвăл тухĕ...» . —
Хăнана пыр, терĕм... . . . . . 33
«Кĕтсе илекенсем телейлĕ...» . . —
Тăватшар йĕркен . . . . . . —
Ним тума та çук ĕнтĕ... . . . . 35
«Ир тăрсан та, каç выртсан та...» . . 36
К ă й к ă р (Поэма) . . . . —
Юманвар салтакĕ (Поэма) . . . . 48
Тымар (Поэма сыпăкĕсем) . . . . 63

Для старшего школьного возраста

Порфирий Васильевич
Афанасьев

ЖИВУ НА ВОЛГЕ

Стихи и поэмы

На чувашском языке

Редактор Р. В. Бородкина
Художник З. И. Чернова
Художественный редактор Е. Е. Михайлова
Технический редактор Н. В. Васильева
Корректор Н. П. Печникова

ИБ 1328

Сдано в набор 16.02.83. Подписано к печати 21.07.83. НТ 18060. Формат 70×90¹/₃₂. Бумага типографская № 1. Гарнитура школьная. Печать высокая. Усл. печ. л. 2,92. Усл. кр.-отт. 3,07. Учетно-изд. л. 3,22. Физ. печ. л. 2,5. Тираж 1500 экз. Заказ № 703. Изд. № 88. Цена 15 коп.

Чувашское книжное издательство,
428000, Чебоксары, пр. Ленина, 4.

Типография № 1 Государственного комитета
Чувашской АССР по делам издательств,
полиграфии и книжной торговли
428019, Чебоксары, Канашское шоссе, 15.

**Афанасьев П. В.**
А 94 Пурӑнатӑп Атӑл хӗрринче: Сӑвӑсемпе поэмӑсем.— Шупашкар: Чӑваш кӗнеке издательстви, 1983.—80 с.

15 п.

Кӗнекене тӑван Чӑваш ҫӗршывне, халӑхсем хушшинчи туслӑха, ӗҫҫыннине халалласа ҫырнӑ сӑвӑсемпе поэмӑсем кӗнӗ.

ББК 84 Чув

12-

15 пус

Чăваш
кĕнеке
издательстви